**2.** Мĕн вăл халал (Халал вăл – уйрăлса каякан çын юлакансене вĕрентсе каланă сăмахсем);

3. Иван Яковлев «Халала» хăçан çырнă? (1921 çулта);

4. Яковлевăн чăваш халăхне панă халалăн тĕп пилĕсем (Турра ĕненĕр, вырăс халăхне хисеплĕр, юратăр, çемьене упрăр, туслă пурăнăр, ĕçе юратăр, сывлăхлă пулăр – тĕрĕс çулпа утăр);

5. Иван Яковлева ăçта пытарнă? (Мускавра).

«Иван Яковлевăн пысăк ĕçĕсем» **кластер** тăватпăр.

Уява пĕтĕмлететпĕр.**Рефлекси.**

– Ачасем, Иван Яковлев тата унăн «Халалĕ» çинчен мĕн çĕнни пĕлтĕр? (ачасем хăйсен шухăшне ăнлантарса параççĕ, хÿтĕлеççĕ: мана литература каçĕ килĕшрĕ; тĕлĕнтерчĕ ; нумай çĕннине пĕлтĕм).

– Чăваш литературин классикĕ Константин Иванов Яковлев çинчен çапла каланă: «Ырă чăваш тупăнчĕ, ырă ĕçе тытăнчĕ». Килĕшетĕр-и эсир çак шухăшпа? (ачасен хуравĕсем: «Критикăллă» шухăшлава аталантарасси);

– Тăван халăхшăн И.Я.Яковлев ĕмĕр манăçми çын. Чăваш халăхĕ ун ятне епле упрать? (Шупашкарта ун ячĕпе çыхăннă вырăнсем: проспект (1984); педагогика унивеситечĕ (1958); музей (1968); палăк (1970); бюст ( 2008).

**Ертсе пыракан:** Халĕ эпĕ сире хут смайликсем кăтартма ыйтатăп. Уяв мĕнле иртрĕ? (ачасем смайликсем кăтартаççĕ).

**Ертсе пыракан:** Çакăнпа пирĕн уяв вĕçленчĕ. Маттур, ачасем! Пултаруллă, тавçăруллă та тимлĕ эсир! Сывă пулăр! Яковлев халалне яланах асра тытăр!


Литература

1. Год духовного просвещения и наследие И.Я.Яковлева. Материалы Яковлевских чтений. – Чебоксары: Типография ПБОЮЛ Л.А.Наумова, 2006. – 157с.

2. Иван Яковлев. Чăваш халăхне панă халал. – Чебоксары: РГУП «ИПК «Чувашия», 2003. – 27 с.

3. Иван Яковлевич Яковлев: фрагменты жизни. Александров Г.А. Издательство «Чувашия», 1997. – 194 с.

4. Краснов Н.Г. Иван Яковлев и его потомки.– Чебоксары: Чувашское кн. изд-во, 2007. – 478 с.

5. Савруков Н.Т., Прокопьев И.П. и др. Дело его жизни.– Чебоксары: Чебоксарская типография № 1, 1998. – 63 с.



***Федорова Елена Сергеевна,***

*Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеçри тĕп шкулта*

*чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен*


## «ИСТОРИ КУСТĂРМИ»

(И.Я.Яковлев çуралнă кунне халаллан̆ă «Чăваш чĕлхи кунĕ» уявра ирттермелли вăйă сценарийĕ)

**Тĕллевĕсем:** 1.Чăваш чĕлхи кунне анлăн уявласа ирттересси;

2. Ачасене И.Я.Яковлевăн, çутта кăларакан̆ăн, пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе тарăнрах паллаштарасси, тăван литературăпа тата тăван ен культурипе кăсăклантарса ярасси;

3. Вĕренекенсен И.Я.Яковлев çинчен тĕплĕнрех пĕлес туртăмне ÿстересси, тавракурăмне аталантарасси;

Чăвашсене çутта кăларакан сумлă та чаплă педагогăн Иван Яковлевич Яковлевăн ятне Раççейре те, ун тулашĕнче те анлă пĕлеççĕ. Вăл 1848 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Тутар Республикине кĕрекен Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче çуралнă. «Унăн çур ĕмĕре пынă нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕ халăхсем хушшинче самана пĕлтерĕшлĕ пулса юлчĕ, тĕнчери тĕрлĕ çĕр-шывсенче ырă ята тивĕçрĕ. Халăха çутта кăларас енĕпе И.Я.Яковлев тунă ĕçсене Раççей империйĕн юлашки виçĕ патши те, РСФСР Министрĕсен Канашĕн Председателĕ В.И.Ленин та, хамăр патшалăхăмăрта тата ют çĕр-шывсенче ĕçлесе тăракан ăсчахсем, çыравçăсем, патшалăхпа общество ĕçĕсене йĕркелесе пыракансем те пĕлнĕ, ырланă», - тесе çырать Л.П.Кураков академик «И.Я.Яковлев. Манăн пурнăç» кĕнекери умĕнхи статьяра.

Ют çĕр-шывсенчи ăслăх тĕпчевĕсенче Иван Яковлевича:

- ик чĕлхеллĕ шкулсенче пуçламăш вĕрентĕвĕн ăнаçлă йĕркине туса хуракан практик-тĕпчевçĕ;
- «наци шкулĕ туса хураканĕ»;
- вĕренмелли тата ытти йышши кĕнекесем пичетлесе кăлараканĕ тесе хакланă;

Кам-ха вăл Иван Яковлевич Яковлев пирĕншĕн?

- чăвашсене çутта кăлараканĕ;
- пĕрремĕш чăваш шкулне уçаканĕ;
- Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçаканĕ;
- чăваш алфавитне йĕркелекенĕ;
- пĕрремĕш чăваш букварне хатĕрлекенĕ;
- пуçласа педагогика комплексĕ йĕркелекенĕ;
- ик чĕлхе вĕрентекен пуçламăш шкул дидактикине тăваканĕ;
- Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн директорĕ, чăваш шкулĕсен инспекторĕ;
- учитель, чĕлхеçĕ, культура ĕçынни, ученăй;
- 20-мĕш ĕмĕрти тĕнчипе паллă çынсенчен пĕри;

И.Я.Яковлев чăваш халăхĕшĕн тунă ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Халăх çырулăхне пуçарса яракан халăх историне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлать.

**«Истори кустăрми» вăййи**

1. Тенкелсем, сĕтел, сĕтел çинче сăмавар, чей чăмрисем, чашкисем.

Сĕтел хушшинче Долгоруков улпут, улпут майри, управляющире тăракан О.А.Косинский поляк.

Яковлев кĕрет: - Ох, ывăнтарчĕ паян çĕр виççе çӳресе.

Майри: -Иван Яковлевич, ларăр пĕрле, чей ĕçĕпĕр.

И.Я.Яковлев: -Тавтапуç. Калăр-ха, Косинский юлташ, ăçтан çавăн чухлĕ кĕнеке сирĕн?

О.А.Косинский: -О-о, кĕнеке вăл – пĕлӳ çăл куçĕ .

И.Я.Яковлев: -Мĕншĕн пирĕн чăвашсен хамăр чĕлхепе çырнă кĕнекесем çукши?

Долгоруков: -А... тен, пурнан пурнăçра пулĕ.

**-Миçемĕш çултан пуçласа И.Я.Яковлев ĕмĕчĕ пурнăça кĕре пуçланă?**
**(а-1871 , ă-1872 , б-1873 çултан)**

2. И.Я.Яковлев 1867-мĕш çулта хăйĕн тĕллевне пурнăçланă: вăл Чĕмпĕр гимназине вĕренме кĕнĕ. 1870-мĕш çулта гимназирен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă.Çак хыпар пичет урлă Раççейĕпех сарăлнă. Пĕр номерĕнче çапла çырнă: «Вĕренсе тухнă чух тыттарнă экзамента уйрăмах Яковлев Иван, Рачинский Порфирий, Панаев Александр, Артизанов Павел отвечĕсем витĕмлĕ пулчĕç.

Педсовет уйрăмах Яковлев Иван хăйне йĕркеллĕ тытнине, гимнази курсăн пур предмечĕсене те отлично пĕлнине, лайăх вĕреннĕшĕн вăл ылтăн медаль илме тивĕç пулнине палăртрĕ...»

**-Çак ырă хыпар çинчен малтан ăçта пĕлтернĕ?**

**(а-«Казанские губернские ведомости» хаçатра, ă-«Вестник Европы» журналта, б-«Симбирские губернские ведомости» хаçатра )**

3. 1868-мĕш çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чĕмпĕр чăваш шкулĕ уçăлнă. Çак шкула малтанах 4 ача пырса çитнĕ. Вĕсенчен пĕри вырăс пулнă.

**-Кам пулнă вăл?**

**(а-Алексей Рекеев, ă-Егор Улюкин, б-Иван Исаев, в-Василий Кашкаров)**

**4. И.Я. Яковлев 1870-мĕш çулхи çурла уйăхĕнче Хусан университетне вĕренме тухса каять. Çавна май вăл хăйĕн шкулне пăхса тăма кама хушса хăварнă?**

**(а-Чĕмпĕр гимназин директорне И.В. Вишневские, ă-Чĕмпĕр кĕпĕрнин халăх училищисен инспекторне И.Н. Ульянова, б-патшалăх пăхса тăнă)**

**5. И.Я. Яковлев Хусан университечĕн хăш факультетне вĕренме кĕнĕ?**

**(а-физикăпа математика факультетне, ă-историпе филологи факультетне, б-юристсене хатĕрлекен факультета)**

6. Хусан университетĕнче вĕреннĕ чухне Н.И.Ильминский профессорпа В.А.Белилин студент пулăшнипе И.Я.Яковлев чăваш алфавитне йĕркелет. Çак ĕçе ыттисене те: тутар ачисен Хусанти шкулĕнче вĕренекен С.Тимрясова, хăйĕн малтанхи вĕренекенне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлекен А.Рекеевпа Пăва уесĕнчи Пимĕрсел шкулĕнче ĕçлекен Т.П.Петров учителе, Кăнна Кушки ялĕнче пурăнакан ача чухнехи юлташне Игнатий Иванова, Çĕрпӳ уесĕнчи Ямаш ялĕнчи Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарие вĕренме килнĕ Д.Филимонова та хутшăнтарнă.

**-Çак ĕçе хутшăннă çынсенчен хăшĕ каярах Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç чиркĕвĕнче ĕçлекен пуп пулнă?**

7. И.Я.Яковлев йĕркеленĕ алфавит темиçе вариантлă пулнă , виçĕ çул хушшинче виçĕ тĕрлĕ улшăннă. 1873 çултанпа Яковлев чăваш чĕлхин алфавитне урăх улăштарман. 1938-мĕш çулта çеç чăваш чĕлхин алфавичĕ вырăс алфавитĕнчен ытлашши уйрăлса ан тăтăр тесе , вăл вырăс чĕлхин алфавитне çывăхрах пултăр тесе ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ И.Я.Яковлев тунă алфавита хăш-пĕр улшăнусем кĕртнĕ. Пирĕн паянхи çырулăх 1871-1873 çç. туса çирĕплетнĕ никĕс çинче аталанать. Хальхи алфавитра 37 сас палли.

**-И.Я.Яковлев йĕркеленĕ алфавитăн юлашки варианчĕ миçе сас паллирен тăнă? (а-25, ă-27, б-47 сас паллирен)**

8. И.Я.Яковлев 1875 çулта университетран вĕренсе тухсан Хусан вĕрентӳ округĕн инспекторĕ , Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн директорĕ пулнă. Анчах та Яковлев çине те тăрăннă. Ăна тивĕççĕр сепаратист, националист тесе айăпланă. 1903 çулта И.Я.Яковлева ура хунă пĕр шовинист тăрăшнипе ăна чăваш шкулĕсен инспекторĕ должноçĕнчен хăтараççĕ.

**-Çак шовинистăн хушамачĕ мĕнле пулнă?**

**(а-В.А. Попов, ă-С.Ф. Спешков, б- А.Н. Деревицкий, в-Н.К. Кульчицкий)**

9.И.Я.Яковлев çырнă калавсем йышлă.

(«Сармантей» юмах инсценировкине пăхма сĕнетпĕр. «Манăн та хумханас» сăмахсем таран)

**-Малалла мĕнле ĕç пулса иртет?**

**(а-ывăлĕ аттине кăларса ывăтать, ă- çĕнĕ çын витрине çапса çĕмĕрет, б-хунямăшĕ чустине кăларса ывăтать)**

10. «Пулă сĕрни» калавăн инсцениировкине курма сĕнни

**-Калав ячĕ мĕнле?**

**(а-«Виçĕ пулăç», ă-«Пулă сĕрни», б-«Вырăс, тутар, чăваш-пурте çын»)**

**Пĕтĕмлетӳ: И.Я.Яковлевăн пархатарлă ĕçĕсене, вăл тăван халăхшăн ĕçленине эпир асра тытма тивĕç. Çак вăйă та пире И.Я. Яковлев çинчен тĕплĕнрех пĕлме май парать.**

Литература


1. А.А.Алексеев «Паллă чăваш чĕлхеçисем», Чăв. кĕн. изд.-ви ,1982.

2. Н.Г.Краснов «Выдающийся чувашский педагог-просветитель», Чеб.-ры , Чув. кн. изд.-во , 1992.

3. «Яковлев И.Я. Моя жизнь: Воспоминания» (Вступ. статья Л.П.Куракова, археогр. предисл. Г.Н.Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г.Краснова) – М.: Республика , 1997.



***Федорова Елена Сергеевна,***

*Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеçри тĕп шкулта*

*чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен*


## «ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ ЯКОВЛЕВ – ЧĂВАШСЕНЕ ÇУТТА КĂЛАРАКАН»

Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш чĕлхин кунне тата И.Я. Яковлев çуралнă куна анлăн уявлаççĕ. Эпĕ Яковлев пурнăçĕ çинчен каласшăн мар, ун пархатарлă ĕçĕсем çинчен кĕскен чарăнса тăрасшăн.

Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ, чĕлхе çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр шутланать. Чĕлхе, халăха пĕрлештерсе, ăна телейлĕ пĕрлĕх пулма май парать. Каланине шута илсен кирек камăн та тăван чĕлхене юратса, хисеплесе сума сумалла. Кирек камăн та хăйĕн тăван чĕлхине хăйĕн мулĕ-тупри пек хакламалла. Халăх ан пĕттĕр, ан çухалтăр тени вăл тăван чĕлхене аталантарниех. Пире тĕнче историйĕ çакна кăтартать: тăван чĕлхене хисеплемен, ăна хак пама пĕлмен чылай халăх çĕр çинчен тĕлли-паллисĕр çухалнă. Чĕлхене аталантаракан тĕп паллăсем шутне алфавит кĕрет.

Çырулăх чĕлхине йĕркелеймен халăх хăйне историре çухатать.Чăваш çырулăх чĕлхине йĕркелекенĕ вара Иван Яковлевич Яковлев пулнă.

- Кам-ха пирĕншĕн И.Я. Яковлев?

И.Я. Яковлев – чăвашсене çутта кăларакан, халăхне çырулăх парнелекен, пĕрремĕш вырăс графикине тĕпе хурса чăваш алфавитне йĕркелекен, пĕрремĕш чăваш букварĕ кăларакан, вĕренӳ кĕнекисем çыракан.

Н.И. Ильминский профессор И.Я. Яковлева чи малтан чăвашсен калаçу чĕлхине сăнама, унти сасăсен хисепне тĕрĕс палăртакан алфавит тумалли çинчен вĕрентсе каланă, унтан ăна университетăн историпе филологи факультечĕн арабпа тутар чĕлхисен уйрăмĕнче вренекен Василий Белилин студентпа, тĕне кĕнĕ тутар ачисен Хусанти шкулĕнче вĕренекен С.Тимрясов чăвашпа паллаштарнă. Каярахпа вара çак ĕçе И.Я. Яковлев хăйĕн малтанхи вĕренекенне, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлекен А.Рекеевпа Пăва уесĕнчи Пимĕрсел шкулĕнче ĕçлекен Т.П. Петров учителе, Кăнна Кушки ялĕнче пурăнакан ача чухнехи юлташне И.И. Иванова,